Предмет: Чăваш чĕлхи (вырăс чĕлхиллĕ шкул)

Ачасен ÿсĕмĕ: 8-мĕш класс

Вĕренÿ кĕнеки:

Печников О.И., Печникова М.Н. Чăваш сăмахĕ:Вырăс шкулĕн 8-мĕш класĕ валли / О.И.Печников, М.Н.Печникова.– Шупашкар, Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015.

Модуль (блок) теми: «Ÿсен-тăран тĕнчи»

Урок теми: Хурăн

Урок тĕсĕ: хутăш урок

Сапăрлăх тĕллевĕсем: Ачасен тавра курăмне пуянлатасси, тăван тавралăха сăнама, юратма, ÿсен-тăран тĕнчин илемĕпе киленме хăнăхтарасси, унăн илемне упрама вĕрентесси.

Вĕренÿ тĕллевĕсем: хурăнпа тĕплĕн паллаштарасси, чăвашла предложенисене грамматика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс йĕркелес ăслайсемпе хăнăхусене çивĕчлетесси.

Аталантару тĕллевĕсем: Çыхăнуллă пуплеве, шухăшлава, тимлĕхе, вулав хăнăхăвĕсене, ыйтусене хуравлас ăсталăха аталантарасси.

Усă курнă технологисем: информаципе хутшăну, проблемăллă вĕренÿ, сывлăха упракан, харпăрлăха аталантаракан, ушкăнра хутшăнса ĕçлеме хăнăхтаракан технологисем.

Ĕç мелĕсемпе меслечĕсем: вĕренÿ кĕнекипе (учебникпа) ĕçлени, çыхăнуллă калав йĕркелени, словарь ĕçĕ, текстпа ĕçлени (илемлĕ вулани, куçару), ыйту-хурав, учитель сăмахĕ, калаçу, проблемăллă ыйтăва хуравлани, тишкерÿ-пĕтĕмлетÿ, танлаштару, çурма сасăпа, саспа вуласси, суйлавлă вулав, ушкăнăн-ушкăнăн ĕçлесси, презентаципе усă курни, учитель панă ыйтăва текстра тупса вуласси, лару-тăру моделĕсене улăштарни (ĕçленĕ тата калаçнă чух пĕр ĕçрен тепĕр ĕç çине хăвăрт куçни), синквейн, кластер йĕркелесси (критикăлла шухăшлав технологийĕн элеменчĕ) , вăйă меслечĕ, рефлекси мелĕ.

Чĕлхе теорийĕ: предложенисене грамматика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс йĕркеле хушакан правило.

Курăмлăх хатĕрĕсем: компьютер, проектор, экран, Pover Point программăпа ачасем валли хатĕрленĕ презентаци, хур тата хурăн ÿкерчĕкĕсем, Ăсан Уçăпăн кĕнекисем, хурăн сĕткенĕ, Чăваш Республикин Хĕрлĕ кĕнеки, «Хурăнăн усси» выставка, тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсем.

Усă курнă литературăпа интернет ресурсĕсем:

1. Печников О.И., Печникова М.Н. Чăваш сăмахĕ:Вырăс шкулĕн 8-мĕш класĕ валли, / О.И.Печников, М.Н.Печникова.– Шупашкар, Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015

2. Печников О.И. Вырăс шкулĕн 8-мĕш класĕнче чăваш чĕлхи урокĕсем **:** меслет сĕнĕвĕсем / О.И.Печников, М.Н.Печникова. – Шупашкар **:** Чăваш Республикин вĕренÿ институчĕн издательствин центрĕ, 2010

3. Чăваш чĕлхи **:** вырăс шкулĕсенчи I-IX классен программи / И.А. Андреев профессор хатĕрленĕ. – Шупашкар, 2004

4. Родной край(6-7 класс) / Елена Енькка. – Чебоксары, 2005.

5. Алексеев О. (Ăсан Уçăпĕ) Чăваш вăрманĕ = Чувашский лес : [учеб. пособие] / Осип Алексеев. – изд. 2-е, испр., доп. – Кугеси, 2001. – 224с. ;
6. dic.academic.ru Словари и энциклопедии на Академике (фразеологизмы)

Слайдсем

1-мĕш слайд: Ачасене урока йĕркелени
2-мĕш слайд: Тĕрĕс калăр!
3-мĕш слайд: Çулталăк вăхăчĕ (çуркунне)
4-мĕш слайд: Тупмалли юмах
5-мĕш слайд: Ăсан Уçăпĕ çинчен çырнă информаци
6-мĕш слайд: Словарь ĕçĕ ирттермелли сăмахсем
7-мĕш слайд: Текста мĕнле ăнланнине тĕрĕслемелли ыйтусем
1 гиперссылка (шăпчăк) - 9-мĕш ыйтăвăн хуравĕ
2 гиперссылка (хурăн туратти)- кану тăхтавĕ
8-мĕш слайд: Эх, сăввăм, янăра!
9-мĕш слайд:Эх, юррăм, янăра!
1 гиперссылка (хĕр ўкерчĕкĕ) - «Хурăн çулçи» юрă (кану тăхтавĕ)
✓ «Во поле берёза стояла» - куçа кантармалли кĕвĕ
10-мĕш слайд: Çыру ĕçĕ ирттернĕ чух фон вырăнне усă куракан хурăнлăх ўкерчĕкĕ
1 гиперссылка (хурăн)- хурăнăн усси (презентаци+ «Рошица» клип)

10-мĕш слайд: Хурăнăн тăвата пахалăхĕ
11-мĕш слайд: Йывăçен сăнарĕсем, хĕр ўкерчĕкĕ, «Калина красная» фильмăн фрагменчĕ
1 гиперссылка (хĕр ўкерчĕкĕ) -Чăваш Республикинчи пысăк хурăнлăхсем
12-мĕш слайд: Çĕнĕ Шупашкар хулин хула варринчи çўллĕ хурăнĕ
13-мĕш слайд: 4 çулталăк вăхăтĕнчи хурăнсем
1 гиперссылка (“Хĕллехи хурăнсем” ўкерчĕк) - чăваш ўнерçисен ĕçĕсем)
14-мĕш слайд: Суйлавлă килти ĕç, рефлекси валли-синквейн (гиперссылка- фон)
15-мĕш слайд: Ўкерчĕк
16-мĕш слайд: Ачасене урокри ĕçшĕн тав туни, сыв пуллашни

Урок юхăмĕ

Йĕркелў саманчĕ (1 слайд)
-Сывлăх сунатăп, ачасем!
-Хăнасене те сывлăх сунар-ха.

Шăнкăр – шăнкăр! шăнкăрав
Акă иртрĕ те тăхтав.
Ларар парта хушшине,
Пуçлар чĕлхе урокне.

Паян сирӗнпе урок эпӗ ирттерӗп. Паянхи урок ӑнӑҫлӑ иртессе, сире килӗшессе шанатӑп.

I. Фонетика зарядки (2 слайд)

- Чӑвашла тӗрӗс, хитре калаҫма чӗлхесене хӑнӑхтарар-ха. Ман хыҫҫӑн тӗрӗс калӑр.

-ӗ-ҫӗ-ӗҫ

ӗҫлеме пуҫлар

-ӑ-сӑ-ӑс-

ӑслӑрах пулар

Вӗрентекен: Ан ӳркенӗр, ӑслӑ пулӑр,
Пӗлмелли питех нумай,
Шырӑр, тупӑр, ҫырӑр, вулӑр,
Ҫивӗчленӗр тӗрлӗ май (П.Хусанкай)

II. Пуплев хӑнӑхтарӑвӗ

1.Калаҫу йӗркелени

-Ҫулталакӑн хӑш вӑхӑчӗ ҫитрӗ? **(3 слайд)**

Килчӗ ырӑ ҫуркунне,
Килчӗ ячӗ ӑшӑтса.
Хӗвел сават тӗнчене,
Хӗл ыйхинчен вӑратса.

- Ҫурхи кунсем ҫитнишӗн эпӗ питӗ хавас.
- Ачасем, эсир ҫуркуннене хавас-и?
- Ҫуркуннене йывӑҫсем те кӗтеҫҫӗ. Часах вӗсем симӗс ҫулҫӑ кӑларӗҫ.

2. Йывӑҫ ячӗсене аса илни

Айтӑр, вӑйӑ выляр-и?
Йывӑҫ ячӗсене пӗлнине
Тӗрӗслесе пӑхар-и?

III. Урокӑн темипе, тӗллевӗсемпе паллаштарни

-Паянхи урокра вара мӗнле йывӑҫ ҫинчен тӗплӗнрех калаҫасси тупмалли юмах тупсӑмӗнчен палӑрӗ.

Мӗнле килти кайӑк ячӗ ҫумне ***ӑн*** хушсан йывӑҫ ячӗ пулать? **(4 слайд)**

-Апла пулсан, паянхи урок теми вара …

- Паянхи урокра эпир сирӗнпе хурӑн ҫинчен калаҫӑпӑр, «Хурӑн» текста тишкерӳллӗн вулӑпӑр, ҫыхӑнуллӑ пуплеве, вулав, куҫару хӑнӑхӑвӗсене аталантарӑпӑр, предложенисене грамматика тӗлӗшӗнчен тӗрӗс йӗркелес хӑнӑхусене ҫивӗчлетӗпӗр.

IV. Ҫӗнӗ материала вӗренни

1.Текстпа ӗҫлени

- Кӗнекесене 172-мӗш страницӑна уҫатпӑр, «Хурӑн» текста тупатпӑр.
- Ку текста кам ҫырнӑ?

-Кам-ха вӑл Ӑсан Уҫӑпӗ? **(5 слайд)** (Унӑн кӗнекисене кӑтартмалла.) Сирӗн учебникри йывӑҫем ҫинчен текстсем ҫак кӗнекерен.

1) Словарь ӗҫӗ **(6 слайд)**

- «Хурӑн» текста лайӑх ӑнланма малтан словарь ӗҫӗ туса ирттерӗпӗр. Ҫак сӑмахсемпе сӑмах майлашӑвӗсенчен эсир хӑшӗсене пӗлетӗр?

Хурăн папки - берёзовая почка
Ăнсăртран - случайно, ненароком
Астив – попробовать, испробовать
Йышăн – занять, занимать
Хайла (кĕвĕле) - сочинять
Вăйă карти – хоровод
Карталанса тăрса - встав в круг, образовывая круг

- Ачасене хорпа вулаттарни
- Сăмахсемпе тата сăмах майлашăвĕсемпе предложенисем тупни.

2) Кăтартуллă вулав

Халĕ эпĕ текста пĕтĕмĕшле вулăп.Тимлĕ итлĕр, ăнланма   тăрăшăр, пусăмсене асăрхăр. Текстăн содержанине вырăсла каласа пама хатĕрленĕр.

3)Текст содержанине вырăсла калаттарни (аудировани)

4) Текста ачасене хăйсене   тĕллĕн çурма саспа вулаттарни

5)Текста саспа вулани

6)Суйлавлă вулав ирттерни

- Текстра паян паллашнă çĕнĕ сăмахсем тата сăмах майлашăвĕсем пур предложенисене тупса вулăр.

8)Ыйтусене хуравлаттарни **(7 слайд)**

- Текста мĕнле ăнланнине пĕр-пĕрне ыйтусем парса тĕрĕслĕпĕр. Эпĕ пуçлатăп.

1. Çуркунне юр кайса пĕтсенех вăрманта мĕн шăрши сарăлать?
2. Пирĕн çĕр-шывра хурăн ăçта тĕл пулать?
3. Ытларах ăçта сарăлнă?
4. Хурăн миçе метр çӳллĕш ӳсет?
5. Хурăн вуллин диаметрĕ миçе сантиметр таран пулать?
6. Хурăн ĕмĕрĕ миçе çул?
7. Хурăн мĕнле вăрманта ӳсет?
8. Пирĕн çĕр-шывра хурăн вăрманĕсем миçе миллион гектар, мĕнпур вăрмансен миçе процентне йышăнаççĕ?
9. Хурăнлăхра мĕнле кайăксен сасси янăрать? (гиперссылка)
10. Хурăн мĕнсен геройĕ?
11. Хурăн камсене мĕн тума хавхалантарать?

2. Эх, сăввăм, янăра! (8 слайд)

Хурăн!
Миçе поэт çырман пуль сан çинчен.
Çемен Элкерĕн «Ешĕл хурăн» сăввине итлесе пăхар-ха.

Таса уйра,тӳремре,
Çул хĕрринчи çеремре,
Ешĕл хурăн çитĕнет.
Тĕрлĕ вĕçен кайăка
Ларса канма, вăй пухма
Хăй еннех вăл илĕртет.

Çавна курса, савнăçпа,
Эпĕ хам та юрлама
Хурăн айне вырнаçап.

3.Эх, юррăм, янăра! (9 слайд)

- Мĕн чухлĕ юрă хайламан-ши шурă хурăн çинчен! Унăн илемĕ пурин кăмăлне те çĕклет, хавхалантарать.

«Укăлча умĕнче шурă хурăн» (Сăвви -В. Урташ, кĕвви - Г. Хирпÿ)
«Çеçен хирти ай, шур хурăн»
«Хурăн»
«Хурăн çулçи» чăваш халăх юрри
«Лартар симĕс йывăçсем»
«Хурăнлăхра куккук авăтать»
«Шурă хурăн» (Сăвви — Юхма Мишши, кĕвви — Константин Рязанов)
«Шурă хурăн» (Сăвви- Чăваш Сашши, кĕвви- Роза Беляева)

Кану тăхтавĕ

Айтăр, эпир те вăйă картине тăрар,
«Хурăн çулçи » юррăн пĕр çаврăмне шăрантарар.
(Ачасем вĕрентекенпе пĕрле доска умĕнче юрлаççĕ)

- Шăппăн вырнаçса ларатпăр. Халĕ кĕвĕ янăравĕпе куçсене кантарса илер. Пурте куçсене хупатпăр. («Во поле берёза стояла» кĕввĕн пĕр çаврăмĕ янăрать.)

-Мĕнле юрă кĕввине итлерĕмĕр?
-Вырăссен те хурăн çинчен вăйă юрри пур иккен.

4. Грамматика материалĕпе ĕçлени (Çыру ĕçĕ) (10 слайд)

- Хурăнсем нумай ÿсекен вырăна пĕр сăмахпа мĕнле калаççĕ?
- Хурăнлăх мĕнле курăнать? Текстри пĕрремĕш предложенипе хуравлатпăр.
-Ку предложение грамматика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс йĕркеленĕ-и?
-Мĕншĕн тĕрĕс йĕркелемен тесе шутлатăр?
(Вĕренекенсем чăваш чĕлхинче предложенисене грамматика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс йĕркелеме хушакан правилăна калаççĕ, вырăс чĕлхинчипе танлаштараççĕ.
- Тетрадьсене уçăр та паянхи числăна çырса хурăр.
-Тĕрĕс предложение çыратпăр.
-Хурăнлăх сăмаха тытăмĕ тăрăх тишкеретпĕр. (1 ача доска умĕнче ĕçлет)
-Хурăн-хурăнлăх мĕнле сăмахсем?

5.Хурăн пайĕсене аса илни

- Пăхăр-ха, ачасем. Мĕнле илемлĕ йывăç вăл хурăн.
-Хурăнăн мĕн-мĕн пур? **(гиперссылка-фон)**
(Хурăнăн вулли, туратти,çулçи, хуппи,тымарĕ, папки,кăчки пур.)
-Хурăнăн кашни пайĕ усă кÿрет. Çулçисене,тураттисене пĕр сăмахпа вырăсла мĕнле калаççĕ?
- Крона. Чăвашла вара -хурăнăн туратлă тăрри)

6. Ушкăнсемпе ĕçлени

-Халĕ ушкăнсемпе ĕçлĕпĕр. Пирĕн виçĕ ушкăн, кашни ушкăнта консультантсем (чăвашла лайăх ăнланакан, пĕлекен ачасем) пур.

-Кашни ушкӑнӑн карточкӑпа усӑ курса грамматика тӗлӗшӗнчен тӗрӗс йӗркеленӗ предложенисенчен ҫыхӑнуллӑ калав йӗркелемелле.

1ушкӑн: Хурӑнӑн туратлӑ тӑррин усси ҫинчен,

2ушкӑн: Хурӑнӑн вуллин усси ҫинчен,

3ушкӑн: Хурӑнӑн хуппин усси ҫинчен.

- ❖ Ачасем ӗҫленӗ вӑхӑтра «Рощица» юрӑ янӑрать.

Ушкӑнсен ӗҫӗсене хаклани

Кашни ушкӑнтан икӗ ача тухать.Пӗри ҫыхӑнуллӑ калава вулать, иккӗмӗшӗ **вӗрентекен пулӑшнипе** япалисене кӑтартса пырать , экран ҫинче те кӑтартма юрать.

1) Хурӑнӑн туратлӑ тӑррин усси ҫинчен грамматика тӗлӗшӗнчен тӗрӗс йӗркеленӗ предложенисенчен йӗркеленӗ **1 ушкӑнӑн** ҫыхӑнуллӑ калавӗ.

Вӗрентекен хушса калани:

Сиплӗ хурӑн милӗкӗ
Хатӗрлетпӗр-ҫке ҫулла.

-Кам мунчара ҫапӑнма юрататать? (Ачасем хуравлаҫҫӗ)

- Эпӗ те ҫапӑнма юрататӑп.

Хурӑн милӗк хумханать,
Ташла-ташла шуратать,
Ал-урана ҫемҫетет,
Ӳт-пӗвӗме вӑй парать,
Вӑрӑм ӗмӗр парнелет.

- Вӗрентсе калани те пур: «Хурӑн пӑтти ҫитернӗ». «Накормили берёзовой кашей». Как вы это понимаете?

Берёзовая каша» - фразеологический оборот. Когда-то, в старые времена, на Руси из голых березовых веток делали розги и били ими детей за озорство и хулиганство. Иногда применяли их и в школах. «Кашей» берёзовые розги назывались из-за того, что в пучке было много веток, и из-за того, что такое наказание всегда вызывало в теле жар. В народе говорили: «Берёза ум дает», «Накормить берёзовой кашей». Ныне розги «берёзовая каша» относятся к разряду телесных наказаний, применение которых запрещено законом.

Сапӑрлӑх саманчӗ: Никамӑн та «Хурӑн пӑтти» ҫиес марччӗ.

2) Хурӑнӑн вуллин усси ҫинчен грамматика тӗлӗшӗнчен тӗрӗс йӗркеленӗ предложенисенчен йӗркеленӗ **2 ушкӑнӑн** ҫыхӑнуллӑ калавӗ.

3) Хурӑнӑн хуппин усси ҫинчен грамматика тӗлӗшӗнчен тӗрӗс йӗркеленӗ предложенисенчен йӗркеленӗ **3 ушкӑнӑн** ҫыхӑнуллӑ калавӗ.

Вӗрентекен хушса калани: Лайӑх хыпса кайса вӑрах ҫуннӑ пирки хурӑн хуппине кӑвайт е кӑмака чӗртме усӑ кураҫҫӗ.

7. Хурӑн сӗткенӗ ҫинчен калаҫни

Шурӑ хурӑн сӗткенне
Тутанатпӑр ҫуркунне.
Хурӑн сӗткенӗ е хурӑн шывӗ теҫҫӗ.

-Ачасем, эсир хурӑн шывӗ ҫинчен мӗн пӗлетӗр?

-Кам хурӑн шывӗ ӗҫсе курнӑ?

-Ачасем, сĕткенне юхтарса хурăна сиен кӳрес марччĕ! Атьăр, лавккара сутакан хурăн сĕткенне активсе пăхар. (Ачасем хурăн сĕткенне ĕçеççĕ.)

8. Пĕлме интереслĕ! (11 слайд)

-Çынсем хурăнăн тĕлĕнмелле уйрăмлăхне те асăрханă: ытти йывăççемпе танлаштарсан ăна нихăçан та аça çапмасть (не ударяет молния).

-Ачасем, хурăнăн хăйĕн кунĕ те пур иккен.

-Ака уйăхĕн 11-мĕшĕ – Хурăн кунĕ шутланать.

(12 слайд)

-Чăвашсем авалах хурăнăн тăватă пахалăхне хисепленĕ. Пĕрремĕш вăл - тавралăха илем кӳни, иккĕмĕш - тасалăхра тытни, виççĕмĕш - шăв-шава лăплантарни, тăваттăмĕш - чир-чĕртен сыватни.

9.Калаçу йĕркелени

1.В народной поэзии сохранилось представление образов деревьев в виде родственников, женщины или мужчины. **(13 слайд)**

-Ачасем, хурăна **кампа** танлаштарма пулать? (Хурăна хĕрпе, савнипе танлаштарма пулать.) Çак танлаштару чăваш халăх юрринче те палăрать. (юрă итлени)

Уй варринче шурă хурăн:
Савни тесе,ай,кайрăм та
"Килех,тусăм" – ай,темерĕ
Чун хурланчĕ - макăртăм та.

-2016 çул Раççейре мĕн çулталăкĕ?

-Хурăн сăнарĕ кинора та пур.

- «Калина красная» фильмăн **хурăн** çинчен калакан фрагментне пăхни.

- Ку фрагмент мĕнле фильмран пулчĕ?

- 2016 çул Чăваш Енре вара кам çулталăкĕ?

2.Чăваш Республикинчи хурăнлăхсем.

Хурăн пирĕн çĕр-шывра
Пур çĕрте те тĕл пулать.
Хамăр патра, чăвашра,
Анлăн сарăлса ларать.

-Ачасем,Чăваш Республикинче те хурăнлăхсем пур. (гиперссылка - хĕр ӳкерчĕкĕ) Хуранлăхсен 63% Йĕпреçри, Улатăрти,Çĕмĕрлери, Патăрьелĕнчи вăрман хуçалăхĕсенче вырнаçнă. (Чăваш Республикин картти çинче кăтартни)

- Хурăнсем тĕрлĕрен пулаççĕ. Пирĕн патра шатра хурăнсем ӳсеççĕ. Лутра хурăнсем те ӳснĕ, анчах та вĕсем сахалланса юлнă, Çавăнпа та вĕсене Чăваш Республикин Хĕрлĕ кĕнекине кĕртнĕ.

3. Çĕнĕ Шупашкарти хурăнсем.

-Пирĕн хулара хурăнсем ӳсеççĕ-и?

-Вĕсене ăçта курма пулать?

-Хула варринче те çӳллĕ хурăн ӳсет. Асăрханă-и? **(14 слайд)**

4.Шкул картишĕнчи хурăнсем

-Шкул картишĕнче хурăнсем пур-и?

-Пурĕ миçе хурăн ӳсет-ши? Уроксем хыççăн шутласа тухăр.

(15-мĕш слайд) Хĕлле те, çуркунне, çулла та, кĕркунне те илемлĕ вăл хурăн.

Ахальтен мар пулĕ ӳнерçĕсенчен нумайăшĕ хăйсен ĕçĕсене хурăна халаллань. Айтăр чăваш ӳнерçисен ĕçĕсене пăхса савăнар. (гиперссылка «Хĕллехи хурăнсем» ӳкерчĕк)

V. Киле ĕç пани (16 слайд)

-Хурăн çинчен пĕр урокра каласа та пĕтерес çук. Килти ĕç суйлавлă пулать:

1) Учебникри «Хурăн» текстпа усă курса кластер тумалла

2) Хурăн çинчен Интернетра, кĕнекесенче интереслĕ материал тупмалла

3) Презентаци хатĕрлемелле

Эпĕ вара буклет турăм, Халĕ сире валеçсе парăп.

VI.Рефлекси

- Паянхи урокра мĕнле йывăç çинчен калаçрăмăр?

- **Хурăн** сăмахпа синквейн тăвасси. (гиперссылка-фон)

-Сире хурăн килĕшет-и?

-Мана та питĕ килĕшет.

Килĕшет чăнах, ырлатăп,
Симĕс тутăр, шур кĕпе.
Кĕркунне вара, ытла та,
Вăл сар тутăрпа чипер.

- Халĕ конвертсене илĕр.Сирĕн конвертра тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсем. Кашниййĕн кирлĕ тĕслĕ çулçă суйласа илмелле те доска патне тухса **хурăн** çине çыпăçтармалла.

Симĕс çулçă - паянхи темăна ăнлантăм

Сарă çулçă - пĕтĕмпех ăнланаймарăм

Хăмăртарах сарă çулçă- нимĕн те ăнланмарăм

- Маттур, ачасем. Питĕ лайăх ĕçлерĕр. Хăвăр ĕçĕре хаклăр.

Урокра ĕçленĕшĕн хăвна мĕнле паллă лартатăн? Суйла.

Хушамат, Ят ____________________________ «5» [ ] «4» [ ] «3» [ ]

Учитель лартнă паллă: _____

- Вĕрентекен хаклани.

VII. Урока вĕçлени

(17 слайд) Шурă хурăн. Илемлĕ, яштака, ырă йывăçа лартса ӳстермелле, пăхмалла, упрама тарăшмалла, унăн илемĕпе киленмелле. Ахальтен мар пулĕ шурă хурăн чăваш халăх чунĕнче сăнарланса юлнă, Раççей халăхĕн символĕ пулса тăнă.

Ачасемпе сыв пуллашни (18 слайд)

-Ачасем, сире паянхи урок килĕшрĕ-и? Килĕшрĕ пулсан ала çупăр, килĕшмерĕ пулсан урапа тăпăртатăр

Пурне те çак урокшăн тавта пуç.
Сывă пулăр, ачасем.
Хурăн пек яштака пулăр.
Хурăн пек илемлĕ пулăр.

Хурăн çулçи пек сарлака пулăр.

Урок ирттерекен:
Çĕнĕ Шупашкар хулин
18-мĕш лицейĕн
аслă категориллĕ
чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕ
Алевтина Александровна Такина